Аттепе аннене суйламаççĕ

Чун вырăнне чул-ши вара?..

Районти çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен, вĕсен прависене хўтĕлекен комисси ларăвĕнчен нихăш хутĕнче те пăлханмасăр тухаймастăн. Право йĕркине административлă майпа пăснă çул çитмен çамрăксемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсене пăхса тухаççĕ кунта. Асăннă комиссин нумаях пулмасть иртнĕ ларăвĕнче те, яланхи пекех, ытларах ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаннисене пăхса тухрĕç.

– Шкула каясшăн-ха. «Горькинчен» ĕçлесе килтĕр-ха, – тет 40 çултан кăшт иртнĕ 3 ача ашшĕ комисси членĕсем кĕçĕн арçын ачи шăпи пирки ыйтсан ним пулман пекех.

Арçыннăн çак сăмахĕсене илтсен, чун кўтсех килчĕ. 7-мĕш класра вĕренекен ачан тăрантармаллаи вара ниçта та ĕçлемен ашшĕпе унăн еркĕнне? Сахал-им уннăн ачине тĕрĕс воспитани памасăр унăн шăпине çамрăклах хуçни? Арçын ача ашшĕн тимсĕрлĕхне пула шкултан писрĕ, халĕ заочно майпа вĕренет.

– Хĕр ачуна мĕн туса пулăшрăн кăçал? –асламăшĕ патĕнче пурăнакан аслă класра вĕренекен хĕр ачине вăл пулăшманнине пĕлсех ыйтрĕç ларура.

– Асламăшĕ пур вĕт, – пĕр хĕрхенў туйăмĕ те палăрмарĕ арçын сăмахĕнче.

Еркĕнĕпе эрех ĕçсе пăтранса пурăннă хушăра хăйĕн тăван тĕпренчĕкĕсен хырăм выçмасть тесе шутлать-ши? Е унăн ачисен ытти çынсен ачисем пекех хитре тăхăнас килмест тесе шутлать-ши? Хăй ача пулман-им? Хăй çамрăк пулманим?

– Мĕн тăватăн вăл хĕрарăмпа, енчен те сан ачусемшĕн вăл пĕрре те тăрăшмасть пулсан?

– Ман вара мĕнле пурăнас? – ачисем çинчен шутлани пĕрре те сисĕнмерĕ арçын сăмахĕнче.

Е тата тепĕр тĕслĕх илсе кăтартам. Ку арçынна икĕ хĕр ачине пăхма алимент тўлеменшĕн пăхса тухрĕç.

–Çĕнĕ çулта парнесем илсе паратăп вĕт, – пулчĕ хурав.

– Мĕншĕн алимент вăхăтра тўлеместĕн?

– Арăмăн асилтермелле пулманим вара мана кун пирки?

???

– Ман паян каялла яла çитме те укçа çук.

Ирĕксĕрех тĕнче илтмелле кăшкăрас килет:

– Арçынсем-и эсир е ?.. Сирĕн ачăрсене кам тăрантарĕ, кам вĕрентсе пурнăç çине кăларĕ?..

Эх, мĕн каласси пур. Тĕнче пăтранать е хамăр. Арçынсем мар, хĕрарăмсем ачисене манса эрехе иленме пуçларĕç. Район администрацийĕн вĕрентў, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ачалăха сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕ И.С. Кабуркина вĕсене ялсем тăрăх пĕрин хыççăн теприне шутласа параять.

Акă Ойкасри А.В. Кудикована хĕр ачине кирлĕ пек пăхманшăн ирĕкрен те хăтарса пăхрĕç. Тĕрĕс пĕтĕмлетў турĕ тетĕр-и? Çук. Паян та эрехпе айкашать. Килĕнче хăйĕн компанийĕ: арçынсем, хĕрарăмсем...

– Муркашри Е.В. Манольăн та, Хорнуйĕнчи А.Н. Пудрикован та шухăшĕ ачисем çинче мар,– хаш! сывлать Ираида Семеновна. – Шутлама та хăрушă ăнăççăр çемьесен йышне. Пĕтĕмпе 92 çемье. Вĕсенче 203 ача нуша курать.

Кусем вĕсем учета илнĕ çемьесем. Учета илменнисем тата мĕн чухлĕн. Миçе ача паян вĕсенче выçă ларать? Миçе ача паян районĕпе çĕр çинчи чи çывăх çынсенчен чун ăшшине кĕтсе илеймесĕр тўрккесленсе пырать. Кăçал кăна çакăн пек çемьесенчи 26 ачана реабилитаци палатине вырнаçтарнă. Тата миçе ача паян аслисем «курман» куççулĕпе макăрать?

Ашшĕ-амăш прависемсĕр юлсан пурăнма çăмăлтарах теççĕ-ши паян хăшĕ-пĕрисем? Çулталăк пуçланнăранпа кăçал 10 çынна çав правасенчен хăтарнă. 13 ача ашшĕ-амăшĕ чĕрĕ-сывă çĕртех паян урăх çемьесенче ўсет. Тавах ырă çынсене, интерната ямалла пулмарĕ вĕсене, тăванĕсемех услава илчĕç. Çакă кăшт лăплантарать: кăçал интерната районтан пĕр ачана та яман. Тăван тăрăхрах хўтлĕх тупрĕç вĕсем. Тăван патĕнче.

Пур вĕт, ытларах вĕт паян пурпĕрех ырă кăмăллă, ют çын нушине чĕре патне илекенсем, пулăшма васкакансем. Çакна районта ют ачасене пурăнма илекен çемьесен йышĕ ўсни те çирĕплетсе парать. Вĕсен йышĕ 10-а çитрĕ. 14 ача паян ют çынсенче тăван ашшĕ-амăшĕ парайман ăшша, юратăва тупрĕ. Çĕре çити таймапуç çакăн пек çынсене. Мăн Сĕнтĕрти Н.И. Волкова акă мăшăрĕпе хăйсен икĕ ачине çитĕнтерчĕ. Хĕрĕ Чăваш ял хуçалăх академийĕн студентки, ывăлĕ 11 класа каять. Халĕ тепĕр икĕ ачана çемье ăшшине пама шутларĕç вĕсем. Тепĕр икĕ чуншăн ашшĕпе амăшĕ пулса тăчĕç.

Çак ялтах пурăнакан Л.В. Петрова вара çемьене харăсах виçĕ ачана пурăнма илчĕ. Иккĕшĕ ача садне çўреççĕ. Тепри 2 çулта. Хăйĕн виçĕ ачине çитĕнтернĕскер, пурнăç илемне ачасенче курать. Акă камсенчен тĕслĕх илмелле паян ачисене ирĕк пурнăçпа, эрехпе улăштарнă амăшĕсен, ашшĕсен.

Л. ПАВЛОВА.

Ял хуçалăх техникине – хĕллехи управа

Нацпроект манăça тухнă е...

Хăвăрт аталанакан пурнăçра пурăнатпăр. Ĕлĕкех те мар ял хуçалăхне механизацилесси пирки калаçатчĕç, «çывăракансене» çўллĕ трибунăсем çинчен питлетчĕç. Кайран çерем çĕрсем уçрăмăр, пусă çаврăнăшне тата агротехнологисене пăхăнса тыр-пул тухăçне 30-40 центнера, çĕр улми тухăçне 200-300 центнера е ытларах та çитертĕмĕр, ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма 5 пин килограмм урлă каçартăмăр т. ыт. те. Мĕн тунипе лăпланни каялла утăм туни пулнине пурте пĕлетпĕр пулсан та, паян кахал çын çеç çĕнĕ технологисемпе наци проекчĕсем пирки калаçмасть, вĕсене пурнăça маларах кĕртсе çĕнĕ ўсĕм картлашкисене пусмасть. Анчах хура кĕркуннепе хĕл чиккине çитнĕ май ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ чух çăкăр тума пулăшакан ĕнер ĕçленĕ техника çине алă сулнисем те куç хĕррине юлмарĕç. «Çĕнĕ технологи» хуçисемпе танлаштарас килет вĕсене! Иртнĕ кунсенче ирттернĕ рейдра тĕрĕслев серепине шăпах çакнашкал хуçалăхсенчен пĕри лекрĕ. Ку вăл – К. Иванов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ. Хуçалăх панкрутра пулсан та, кунти ўкерчĕке ыттисем ан туччăр тесе вулакансем умне тухатпăр та паян. Юлашки çулсенче Ятмансемпе Шупуçсем техникăна упрасси çине тăтăшах алă сулса пăхни те хуçалăха çакнашкал лару-тăрăва кĕртсе ўкерчĕ-тăр. Паян кунта вырмара тырă аланă çĕрте асфальт хĕррипе тырă каяшĕн куписем сип-симĕс ешерсе лараççĕ, вырмана хутшăнайман «хир карапĕсем» хăрушсăрлăх техникине пăхăнмасăр тимĕр тĕревсем çинче «шанчăклăн» хĕл кĕтеççĕ, автомашина кустăрмине те йыăç каска ылмаштарать, пур-çук техника вăтанса çум хыçне пытанать. Ăçта-ха кунта экономика аталанăвĕ, «АПК-на аталантарасси» приоритетлă наци проекчĕн ыранхи кунĕ? Ку хуçалăхри чылай ыйтусене çывăх малашлăхра тулашри управляющи татса парĕ.

С. НИКОЛАЕВ,
районти патшалăх техника надзор инспекцийĕн пуçлăхĕ-патшалăхăн аслă инспекторĕ;
А. БЕЛОВ,
хаçатăн экономика пайĕн ертўçи.

Шкул ачисен пултарулăхĕ

Шкулта

Эпир шкулта вĕренетпĕр,
Юрататпăр çак шкула,
Ирсерен унта çўретпĕр
Çул тупмашкăн малалла.

Акă шăнкăрав та пулчĕ,
Эпир кĕтĕмĕр класа.
Вĕрентекен килсе çитрĕ,
Вăл пуçларĕ урока.

Вĕрентет пире вăл тĕплĕн
Аслă-тăнлă çын пулма.
Эс пулсан пысăк пĕлўллĕ
Пултаратăн ĕç тупма.

Шăнкăрав каллех янрать,
Тăхтав вăчăхĕ вĕт халь.
Пĕрисем класрах юлаç,
Теприсем тухаç тула.

Уроксем те часах пĕтрĕç,
Киле кайма вăхăт-çке.
Кам пĕччен утать киле,
Кам хăй юлташĕпеле.

Марина СЕРГЕЕВА.
Хорнуй ялĕ.

Актуаллă ыйтупа

Муркашсем Шупашкар агломерацине кĕрĕç

Хаçатăн иртнĕ номерĕсенчен пĕринче Шупашкар агломерацине туса хурассипе Шупашкар хула администрацийĕ ирттернĕ канашлу çинчен каласа панăччĕ. Çак кунсенче Республикăн тĕп хулинче Шупашкар хулин тата Шупашкар агломерацийĕн аталанăвĕпе çыхăннă ĕç вăйăин элеменчĕсемлĕ конференци иртрĕ. Конференци ĕçне Шупашкарпа Шупашкар агломерацийĕн аталанăвĕн енĕсене хатĕрленĕ «Ленгипрогор» институчĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество сотрудникĕсем хутшăнчĕç, Шупашкарти пысăк предприятисен ертўçисем, Шупашкар агломерацине кĕрекен районсен представителĕсем, çав шутран пирĕн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова хутшăнчĕç.

Мĕнле майпа тата мĕн тĕллевпе йĕркелеççĕ Шупашкар агломерацине? Çак ыйтусем тавра йĕркелерĕмĕр те калаçăва район администрацийĕн экономика пайĕн ентўçипе Э.И. СИМАКОВАПА. Хăйĕн сăмахне Эльвира Иосифовна агломерацие йĕркелемелли ыйту патне мĕнле майпа пырса тухнинчен пуçларĕ:

– Юлашки çулсенче пирĕн çĕр-шывра хула тумалли тата стратеги аталанăвĕн документчĕсене хатĕрлессипе нумай ĕçлеççĕ. Ку ĕç ял тăрăхĕсенчен пуçласа федераци субъекчĕсем таранах пулса пырать. Çак ĕç вăйлансах пыни акă мĕне ăнланнипе çыхăннă. Юлашки 10 çулта экономика аталаннăçемĕн аталанса пырать.Çавна май экономика аталанăвне пыра-киле хуласемпе территорисене эффективлă мар аталанса пыни (тĕслĕхрен, вырăн-вырăнпа çеç çĕнĕ объектсем туни, транспортпа инженери инфраструктури кирлĕ пек аталанайманни т.ыт. те) ура хума пултарать.

Чăнах та, 2000 çулччен пирĕн çĕр-шыври регионсемпе хуласене нумай çуллăха стратеги планĕсем кирлех пулман, мĕншĕн тесен экономика тăнăç аталанса пыраймăн. 1999-2000 çулсенче экономика палăрмаллах аталанма пуçлани хуласемпе территори йĕркелĕвĕсен ертўçисенчен çĕнĕлле ыйтма пуçларĕ: кризис тапхăрĕнче мар, аталанса пыракан экономика условийĕсенче мĕнле малалла каймалла, хамăрăн конкурентлăхпа мĕнле эффективлă усă курмалла, финанс тĕлĕшĕнчи тата çынпа çыхăннă капиталшăн пыракан кĕрешўре мĕнле майпа юнашарти регионсемпе хуласем умĕнче куçран ўкмелле мар?

Хăвăрах асăрхатăр пулĕ, юлашки 20 çул хушшинче çынсем ытларах пысăк хуласенелле туртăнма пуçларĕç. Ку паллă ĕнтĕ, унта вĕсене ĕç тупма çăмăлтарах. Пысăк хуласен бизнеса аталантарма та меллĕ. Ку вара регионсем хушшинче кадрсемпе капиталшăн конкуренци туса хума пултарать.

Çакăн пек дисбаланс (пысăк регионсен тĕп хулисем регионсенчи ытларах вăя хăйсем енне туртса илни) регионсемпе хула влаçĕсем умне çĕнĕ çăмăлах мар задача кăларса тăратать: конкуренцие чăтăмлă пулнипе пĕрлех çав «хуранта» «пиçсе» каймалла та мар.

Ку задачăна ытларах хуласен генеральнăй планĕ татса пама пулăшать. Йывăрлăхĕ кунта акă мĕнре – пысăк хуласен витĕмĕ официаллă хула чиккинчен тухса каять. Çынсем кунсерен пысăк хуласене ĕçе çўреççĕ. Автомобильсем нумайланса кайнипе те çав хула таврашĕнче пурăнакансене «аякри хуласум» çынни пек шутлама май парать. Тĕнчери опыт çакна кăтартса парать: çакнашкал йĕркелўсен ыйтăвĕсене агломераци туса хуни татса пама май парать.

– Тата мĕн шута илеççĕ агломерацие йĕркеленĕ чухне?

– Пысăк хула е темиçе хула (100 пин çынран кая мар пулмалла вĕсенче халăх йышĕ) таврашĕнчи вырăнсенче халăх йышланма пуçласан, агломераци тумалла тесе шутлаççĕ. Çав вырăнсемпе агломераци центрĕ хушшинче çынсем куллен унта ĕçе çўреме пултармалли транспорт çыхăнăвĕ пулмалла. Çапла майпа ĕçпе пурăнмалли çурт-йĕр рынокĕсем пĕр пулса каяççĕ. Агломерацин кирек хăш пайĕнче пурăнакансем те социаллă, культура, вăхăта усăллă ирттермелли вырăнсемпе пĕр пекех усă курма пултараççĕ. Шалти çыхăнусем çирĕплленсе пынипе агломерацинчи предприятисем хăйсен кооперациллĕ çыхăнăвĕсене аталантарма пултараççĕ. Çав шутран наука тĕлĕшĕнчен те, вĕсем пĕрпĕрин технологине вĕренме пултараççĕ.

– Агломераци туса хуни мĕн енĕпе лайăх?

– Чи малтан, нумай йышлă тата дифференциллĕ ĕç рынокне туса хума пулать. Ку вара çав территорие инвестици тĕлĕшĕнчен илĕртўллĕ туса хума май парать. Инвестора та лайăх вĕт вĕсене кирлĕ пысăк квалификациллĕ специалистсем вырăнтах пулни.

Тепĕр енчен, кун пек территори таварсене вырнаçтарас, тĕрлĕ пулăшу парас енĕпе те илĕртўллĕ.

Агломерацин тепĕр ырă енĕ – инфраструктура тĕлĕшĕнчен нумай ĕçсем туса ирттерме пулать: строительствăра пысăк хăватлă çĕнĕ объектсене, транспорт комплексĕсене, мультимоделлĕ çыхăнусене, информаци коммуникацийĕсене, вĕрентўпе инноваци инфраструктурине хута яма май парать.

Пысăк хулапа юнашар пурăнни агломерацие кĕрекен пур çынна та ĕç шырассипе те, вĕрентў, суту-илў, культура тата ытти енĕпе те пур майсемпе те усă курма май парать.

Экономика тĕлĕшĕнчен аталанса пыни, халăхăн пурнăç шайĕ лайăхланни, вĕренў тĕлĕшĕнчен тата профессипе ĕç тупас енĕпе меллĕ пулни те агломераци илĕртўлĕхне ўстерет.

– Кунта халь вулакансен ыйту пулма пултарать: Шупашкарпа ун çывăхĕнчи территорие агломераци туса хуни мĕншĕн кирлĕ?

– Агломераци аталанăвĕн концепцине Раççейри тĕрлĕ хуласенче тĕрлĕ сăлтавсене пула тăваççĕ. Тĕслĕхрен, Çурçĕрти тата Аякри Хĕвелтухăç хулисем (Новосибирск, Красноярск, Иркутск, Владивосток) агломерацие пурăнмалли тата ĕçлемелли условисене Раççейĕн Европа пайĕсенчи хуласенчен кая мар тăвас тесе йĕркелеççĕ. Раççейĕн Европа пайĕнчи пысăк хуласем (Дон çинчи Ростов, Екатеринбург, Самара) агломераци туса хăйсем регионсем хушшинче вăйлине палăртаççĕ. Шупашкара вара агломераци туса хуни Атăлçи тăрăхĕнчи çывăх хуласемпе (Чулхула тата Хусан) ресурссемшĕн пыракан конкуренцие чăтма пулăшать. Çак икĕ хула таврашĕнче 1,5 миллион çын пурăнать. Шупашкартан автобуспа вĕсене 2-4 сехет хушши çеç каймалла. Енчен те Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисем тата вĕсем тавра вырнаçнă яллă вырăнсем хăйсем тĕллĕн çеç аталанса пыраççĕ пулсан, Шупашкар регионсен айккинчи (мĕншĕн тесен Чулхулапа Хусан пысăк хуласем шутланаççĕ, апла пулсан ĕç рынокĕ те, капиталпа усă курасси те, çурт-йĕр тĕлĕшпе та лайăх аталану вĕсенче) хула пулса юлма пултарать. Çапла вара çак пĕтĕм ĕçе йĕркелесе ертсе пырас вырăнне айккинче юлнă хуласен пысăк хуласене кирлех мар функцисене туса пымалла çеç пулĕччĕ. Пĕчĕк квалификациллĕ тата сахал тўлекен ĕçре камăн ĕçлес килет? Акă мĕн тума кирлĕ пире Шупашкар агломерацине туса хуни.

Тепĕр енчен, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпў хулисем хăйсене çывăх вырнаçнă яллă вырăнсемпе пĕрле çитес темиçе çултан 700 пин çын ытла пурăнакан агломераци йĕркелĕвĕ пулса кайма пултараççĕ. Ку вара асăннă хуласене те, вĕсен çывăхĕнчи яллă вырăнсене те вăйлă аталанса кайма май парать. Агломерацие кĕрекен хуласемпе яллă вырăнсен вăйлă аталанакан енĕсене палăртсан, вĕсене аталантарсан (калăпăр, пирĕн район ял хуçалăх районĕ шутланать. Апла пулсан унран хатĕрлекен продукцисене туса кăларакан предприятисене те хамăр патрах уçни вырăнлă) Шупашкарпа пĕтĕмĕшле агломераци Атăл тăрăхĕнчи пысăк хуласемпе ăнăçлă конкуренцие кĕме пултарать, çав условисенче аталанма пултарать. Çакăнта куратпăр та Шупашкар агломерацине туса хурассин тĕллевне.

– Тавах. Эльвира Иосифовна, калаçушăн.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.